# Вăхăт çитнĕ те – чĕлхемĕр алăксене уçнă

*1920 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче РСФСР Совечĕсен Тĕп Ĕçтăвкомĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ декрет кăларса Чăваш автономи облаçне (ЧАО) туса хума йышăннă. Ăна йĕркелени чăваш халăхĕн Атăлçи Пăлхар патшалăхне çухатнă хыççăнхи ĕмĕтне çитерессишĕн хывнă çулăн пĕрремĕш утăмĕ кăна пулнă. ЧАО хăйĕн умне пысăк улшăну тума, çав шутра халăхăн çыру тата калаçу чĕлхин пĕлтерĕшне ӳстерме, тĕллев лартнă. Çакăн çинчен Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ертсе пыракан сотрудникĕпе, истори наукисен кандидачĕпе Владимир Клементьевпа калаçатпăр.*



• *Пĕрремĕш ретре лараççĕ (сулахайран сылтăмалла): Чăваш патшалăх издательство директорĕн çумĕ А.И.Иванов, издательство директорĕ П.З.Львов, «Канаш» хаçатăн литература сотрудникĕ С.М.Авксентьев (Лашман), хаçат редакторĕ Г.Т.Алентей, Н.Я.Золотов, çутта кăларакан редактор Н.К.Кириллов (Патман). Иккĕмĕш ретре: хаçатăн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Н.А.Андреев (Ухли), яваплă секретарĕ С.Ф.Фомин (Хумма Çеменĕ), ФЗУ шкулĕн директорĕ А.Т.Быков, Самохвалов, Скориков, издательствăн литература пайĕн ертӳçи Н.Т.Никифоров (Ваçанкка), тивĕçтерӳ пайĕн заведующийĕ П.Д.Дмитриев. 1924 ç.*

Станислав ОТРЫВАНОВ архивĕнчи сăн ӳкерчĕк

## Чрезвычайлă мерăсем

**– 1917 çул хыççăн Коммунистсен партийĕпе Советсен наци политики тата вак халăхсен администраци-территори единицисем никĕслес шухăш-ĕмĕчĕ тӳр килнĕ. Çавăнпа вĕсем автономисем туса хума пултарнă. Çапла мар-и?**

– Килĕшмелле. «РСФСРăн наци ыйтăвĕн тĕшши – патшалăх, культура, хуçалăх тĕлĕшпе кая юлнă халăхсене Раççейĕн тĕп пайне хăваласа çитме май туса парас тесе социаллă пурнăçпа экономикăна, иртнĕ пурнăçран еткерлĕхе куçнăскере, пĕтересси», – тенĕ И.В.Сталин. 1920 çулсенче титуллă вак халăхсен чĕлхине администраци-территори единицисен официаллă хутшăну çаврăнăшне кĕртесси Коммунистсен партийĕпе Советсен наци политикин пысăк пĕлтерĕшлĕ пайĕ шутланнă, РКП/б/ Тĕп Комитечĕ тата Советсен Тĕпĕçтăвкомĕ ертсе пынипе вырăнсенче нацисен чĕлхисене аталантарассишĕн тăрăшнă. Чăваш Ен влаçĕ çӳлтен антарнă ку тĕллеве хапăл тусах йышăннă, мĕншĕн тесен чăваш интеллигенцийĕ тăван чĕлхе пĕлтерĕшне ӳстерме ыйтнине пĕлсе тăнă, çутталла туртăнакансен шухăшĕмĕтне тивĕçтерме тăрăшнă.

РКП/б/ Чăваш обкомĕ тата ЧАО Совечĕсен Ĕçтăвкомĕ центр лартнă тĕллеве «Чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртмелли политика» ят панă. «Тăван чĕлхене учреждениcен ĕç-хĕлне кĕртни пысăк пĕлтерĕшлĕ, çав пĕлтерĕш чăвашсен хĕссе лартнă ăс-тăнне хускатать, çирĕплетет, вĕсене совет влаçĕпе пĕрлешме хистет» тенĕ Ĕçтăвком 1921-1922 çулсемшĕн туса панă отчетра.

**– Чăваш чĕлхине аталантарасси çинчен 1917 çулхи нарăс уйăхĕнчи революци хыççăн уççăнах калаçма пуçламан-и?**

– Пуçланă. Анчах Граждан вăрçи, кĕпĕрнесен администраци-территори тытăмĕсем чĕлхене патшалăх, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, çар чаçĕсене, обществăри хутшăнăва кĕртме чăрмантарнă. Чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртмелли политикăна /малалла программа тейĕпĕр/ ЧАО йĕркелесен çеç йышăннă тата пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсен шайне хăпартнă. ЧАО Совечĕсен I съезчĕ /1920 çулхи чӳк уйăхĕн 7-11-мĕшĕсенче иртнĕ/ уессен, вулăссен, ял Совечĕсен умне çавнашкал тĕллев лартнă: «Совет строительствине чăваш массисене явăçтарассишĕн тăван чĕлхене Советсене, шкулсене, обществăн ытти организацине кĕртес тĕллевпе чрезвычайлă мерăсем йышăнмалла». Съезд облаçăн вĕрентӳ пайне çапла хушнă: «I тата II сыпăксенчи шкулсенче чăваш чĕлхине предмет вырăнне лартса пĕлӳ панипе пĕрлех унпа ытти предмета та вĕрентмелле».

## Тăван сăмах ян та ян кайнă

1921 çулхи кăрлач уйăхĕнче ЧАОн управлени пайĕн канашлăвĕнче облаçăн, уессен, вулăссен учрежденийĕсенче ĕçлекенсене чăвашла вĕрентмешкĕн курссем йĕркелессине сӳтсе явнă. РКП/б/ Чăваш обкомĕ çав çулхи çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртмелли политикăна еплерех ĕçе кĕртнине тишкерсе «чăваш чĕлхине реализацилемешкĕн» облаç Ĕçтăвкомне мерăсем васкавлăн йышăнма сĕннĕ. Çав кунах Ĕçтăвком хăйĕн вĕрентӳ пайне чĕлхене пурнăçа кĕртмелли программа проектне хатĕрлеме хушнă. Ăна 1921 çулхи раштав уйăхĕнче облаçри халăха вĕрентес ĕç деятелĕсен II съездĕнче сӳтсе явса ырланă. Чăваш чĕлхине «пĕр тăхтамасăр реализацилеме пулать тата ăна аталантарни халăха вĕрентес, ертсе пырас ĕçре, судра, çĕр ĕçĕнче питĕ кирлĕ» тенĕ программăра. Чăваш шкулĕсен 1-4-мĕш класĕсенче «чăваш чĕлхипе çеç вĕрентмелле, 5-7-мĕш классенче предметсене чăвашла та, вырăсла та пĕлӳ пама юрать, анчах чăваш чĕлхине, историе, этнографие, краеведение чăвашла кăна вĕрентмелле» тенĕ. I сыпăкри шкулсенче вĕрентекенсен курссемпе конференцисенче чи малтанах «чăваш чĕлхипе пĕлӳ памалли меслете алла илмелле, тăван чĕлхене аталантарма наука-методика канашĕ туса хумалла, чăваш чĕлхине вĕрентмелли букварь тата ытти кĕнеке кăлармалла».

**– Судпа следстви органĕсене программăн мĕнле мерисем пырса тивнĕ?**

– Вĕсене 1921 çулхи раштав уйăхĕнче облаçри юстици деятелĕсен I съездĕнче тишкернĕ. «Чăвашсем хутшăнакан суд ларăвĕсенче чăвашла калаçассине пĕр пăркаланмасăр йышăнмалла, чăвашла пĕлмен çынсене суд процесне явăçтарнă чухне те суд производствине тăлмача хутшăнтарса тăван чĕлхепе йĕркелемелле, вырăсла çырнă йышăнусене судьян чăваш чĕлхипе вуласа памалла» тенĕ унăн резолюцийĕнче. Съезд чăвашсен уесĕсемпе вулăсĕсенче суд производствине тăван чĕлхепе пурнăçлама, облаçăн юстици пайне процессенче усă курмалли формăсене чăваш чĕлхипе çырса хатĕрлеме, суд производствине чăвашла йĕркелемешкĕн судьясемпе следовательсем валли курссем уçма, вĕсене чĕлхене вĕрентме, хăйсен пĕлĕвне практикăра çирĕплетме ыйтнă.

Облĕçтăвком 1922 çулхи кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕнче «Чăваш облаçĕнче чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртесси» документ çирĕплетсе ăна патшалăх учрежденийĕсен шайне çĕклеме, унпа совет органĕсенче, кооперативпа общество организацийĕсенче пĕр пăркаланмасăр усă курма тата чăваш шкулĕсенче предметсене вĕрентме, чăвашсем хутшăнакан суд ларăвĕсенче калаçма, суд производствине, почта, телефон, телеграф çыхăнăвне йĕркелеме йышăннă.

## Эпир хирĕç! Кирлĕ мар...

**– Облĕçтăвком çав çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче «Чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртесси çинчен калакан пăрăнми йышăну» кăларнă. Ун пирки мĕн калатăр?**

– Облаçри партипе совет органĕсенче, общество учрежденийĕсенче ĕçлекенсене чăваш гражданĕсемпе чăвашла калаçма, чăвашла çырнă документсене пур çĕрте те йышăнма, влаç тытăмĕсем чăвашсем патне çитерме палăртнă официаллă материалсене чăвашла çырма, чăвашсем пурăнакан вырăнсене командировкăна чăваш чĕлхине пĕлекен çынсене кăна яма, облаçпа уессен управленийĕн органĕсене ĕçе илнĕ тата вĕсен штатне пĕчĕклетнĕ чухне чăвашла пĕлекенсене маларах вырăна тăратма хушнă. Чăвашсем пурăнакан ялсен тата вулăссен Совечĕсен ĕçтăвкомĕсенче, облаçпа уессен вĕрентӳ, управлени, çĕр, ĕçлев, юстици, транспорт пайĕсенче ĕç хучĕсене чăвашла çырма ыйтнă. Тăван чĕлхене пурнăçа кĕртмелли программăна еплерех пурнăçланине тĕрĕслесе тăма Ĕçтăвкомăн вĕрентӳ пайĕ çумĕнче «яланхи уйрăм комисси» туса хунă. Вăл программăна мĕнлерех пурнăçланине центра пĕлтерме документсем, мероприятисем ирттерме план хатĕрленĕ, вĕсене еплерех ĕçе кĕртнине тĕрĕсленĕ. Комиссире вĕрентӳпе управлени пайĕсен ертӳçисем, наукăпа общество деятелĕсем М.П.Петров /Тинехпи/, Д.П.Петров /Юман/, Ф.Т.Тимофеев, Н.И.Ванеркке, Ф.П.Павлов, ыттисем ĕçленĕ.

**– Облĕçтăвком çӳлте тишкернĕ икĕ йышăнăва халăхăн çыру тата калаçу чĕлхине мĕн пур шайри çаврăнăша кĕске хушăра кĕртес тĕллевпе кăларни куçкĕрет.**

– Çапла. Вĕсем хăйсен радикализмĕпе палăраççĕ, чылай тĕслĕхре совет тата хуçалăх органĕсенче ĕçленĕ çынсем мĕнле чĕлхепе калаçнипе тата çырнипе çыхăнса тăмаççĕ. Калăпăр, 1922 çулта облаç вăрманĕн 112 специалистĕнчен – 15-шĕ, çĕр висçнĕ 13 çынран 4-шĕ çеç чăвашла пĕлнĕ. 1923 çулта чăвашсем Ĕçтăвкомăн финанс пайĕнче – 20%, уессен финанс пайĕсенче – 20-25% çеç, Ĕçтăвкомăн çĕр пайĕнче – 45,6%, I сыпăкри шкулсен вĕрентекенĕсем – 65-70%, II сыпăкри шкулсенче – 29%, техникумсенче 10-15% ĕçленĕ. Патшалăхпа общество учрежденийĕсен ĕçне, документацие чăвашла йĕркелеме, вырăсла çырнине чăвашла куçарма тăван чĕлхене лайăх пĕлекен специалистсем çитменни, документсен чăвашла терминологийĕ пулманни, чăваш çырулăхĕн шрифчĕллĕ машинкăсем, чăвашла вĕренес текенсем валли методика литератури çукки пĕтĕм ĕçе йĕркелеме чăрмантарнă.

**– РКП(б) Чăваш обкомĕпе Ĕçтăвком йышăнăвĕсене чăвашла çырма-калаçма пĕлмен çынсем мĕнле йышăннă?**

– Ырламан, вĕсене хирĕçлесе центра çăхавсем çырнă. Сăмахран, облаçри «Всеработземлес» управленийĕ РСФСР Тĕпĕçтăвкомĕн президиумĕ çумĕнчи Çĕр ĕçĕсен федераци комитетне çăхав çитернĕ, «чăвашсем пурăнакан ялсене чăвашла пĕлекенсене çеç командировкăна ямалла» сăмахсене йышăнуран кăларма ыйтнă. Заявление РСФСР Шалти ĕçсен тата Национальноçсен Халăх Комиссариачĕсем тĕрĕсленĕ хыççăн Облĕçтăвком хăйĕн маларахри йышăнăвĕнчен 1923 çулхи кăрлач уйăхĕнче «чăвашсем пурăнакан ялсене чăвашла пĕлекенсене çеç командировкăна ямалла» йĕркене улăштарнă, вĕсене «учреждениcен ытларах чăвашла пĕлекенсенчен командировкăна кайма ыйтмалла» сăмахсем кĕртнĕ. Çавăн пекех йышăнуран хăш-пĕр учрежденин, çум пайсен, секцисен пуçĕнче «чăвашла пĕлмен çынсен пулмалла мар» сăмахсене кăларнă, унта «чăвашла пĕлекен çынсен ытларах пулмалла» йĕркесене кĕртнĕ.

## Тӳре-шарана та итлеттернĕ

Облĕçтăвкомăн юстици пайĕн ертӳçи П.А.Алексеев /чăваш/ РСФСР Юстицин Халăх Комиссариатĕнчен Ĕçтăвком йышăнăвне, уйрăммăн илсен совет органĕсен тата чăвашсем хутшăнакан суд ларăвĕсен ĕçне чăваш чĕлхипе йĕркелеме хушнине, пăрахăçлама ыйтнă. РКП/б/ Чăваш обкомĕн бюровĕн 1922 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнчи ларăвĕнче П.Алексеев шухăшĕ партин Тĕп Комитечĕпе Облĕçтăвкомăн резолюцийĕсемпе тӳр килменнине палăртнă, ăна партирен тата должноçран кăларнă, ĕçне ревтрибунал судĕнче пăхма панă.

**– Обкомпа Облĕçтăвком ыйтнипе, яланхи комисси тĕрĕслесе тăнипе программăна пурнăçа кĕртессишĕн 1920 çулсенче ĕç нумай тунă-и?**

– Сахал мар. Ăна пурнăçлама чăрмантаракан субъективлă тата объективлă сăлтавсене те шута илме тивнĕ. Кадр политикине тытса пынă чухне пирвайхи условисенчен пĕри чăваш чĕлхине пĕлни тĕп вырăнта пулнă. ЧАО ертӳçисем центр облаç валли çирĕплетекен должноçсене уйăрса лартассипе те программăна пăхăнма тăрăшнă. Тĕслĕхрен, Мускавран облаçа ярса панă Данилов чăвашла пĕлмен пирки обком бюровĕ ăна облревтрибунал председателĕ пулма лартассине хирĕçлесе йышăну кăларнă, çакăн çинчен РСФСР Аслă трибуналне хурав панă. Шупашкара ГПУ уйрăмĕн ертӳçин должноçне йышăнма янă çын кандидатурине те обкомпа Ĕçтăвком хирĕçленĕ, «чăвашла, йăлайĕркене, чăваш пурнăçне лайăх пĕлекен» В.В.Тюмерова çирĕплетме ыйтнă.

Облĕçтăвкомăн вĕрентӳ пайĕ 1922 çулхи пуш уйăхĕнче ĕç хучĕсене чăвашла çырмашкăн вĕренме служащисем валли курссем уçнă, вĕсене 35 сотрудника 15 учрежденирен янă. Пĕлӳ илмелли программа 85 сехете пынă, М.П.Петров, Н.И.Ванеркке, К.М.Никишев, А.П.Лбов служащисене чăваш орфографине, морфологине, синтаксисне, чăваш халăхĕн историне, ăнлантарса вулама, ĕç хучĕ çырма вĕрентнĕ.

Ĕçтăвкомăн вĕрентӳ пайĕн ертӳçи Н.А.Алексеев ертсе пынă ушкăна /Н.И.Ванеркке, К.Г.Наумов, Ф.Д.Денисов, Кротов/ политика, экономика, наука, литература, юридици терминĕсене вырăсларан чăвашла куçарма, словаре 1922 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне кун çути кăтартма хушнă. Партин 1923 çулхи XII съезчĕн тата Тĕп Комитет наци автономийĕсен ертӳçисемпе ирттернĕ IV канашлăвĕн йышăнăвĕсен витĕмĕпе вак халăхсен чĕлхисене, çав шутра чăваш чĕлхине, пурнăçа кĕртмелли программăсене ĕçе кĕртесси пушшех вăй илнĕ.

**– Владимир Николаевич, çакăнпа калаçăва вĕçлер, ăна «Хыпарăн» çитес номерĕсенчен пĕринче тăсăпăр. Çапла пĕтĕмлетес килет: ЧАО йĕркеленĕ хыççăн унăн революци комитечĕ Платон Львова Шупашкарта типографи уçас ĕçе ертсе пыма хушнă. 1921 çулхи раштав уйăхĕнче ăна Чăваш патшалăх издательствине ертсе пыма шаннă. Вăл 1922-1923 çулсенче 15 ятпа – 49351, 1923-1925 çулсенче 178 ятпа 653 пин кĕнеке, çав шутра чăвашла вĕрентмелли методика литературине те, пичетлесе кăларнă.**

■ Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă